Эпĕ хам ĕмĕрте ăçта кăна çитмен, кама кăна курса калаçман пулĕ. Хамăр тăван культура çинчен сăмах тапратсан яланах Петĕр Хусанкайпа Ухсай Яккăвĕн ячĕсене аса илеттĕм. Вĕсене Тăван çĕршывăмăрăн пур кĕтессинче лайăх пĕлни мана савăнтаратчĕ, чун-чĕрере мăнаçлăх çурататчĕ.

Пĕр çулхине эпĕ Мускав çывăхĕнчи Малеевка текен писательсен пултарулăх çуртĕнче пултăм. Çапла, çуллахи ăшă, хĕвеллĕ кун вăрман хĕррипе утса пыратăп. Пăхатăп та — мана хирĕç пысăках мар çын утса пырать. Эпĕ ăна халиччен курман. Паллашрăмăр. Ку вырăссен паллă поэчĕ Павел Железнов пулчĕ. Вăл эпĕ Чăвашран килнине пĕлсен тӳрех:

— Унта ман тус, Яков Гаврилович Ухсай, мĕнле пурăнать? — тесе ыйтрĕ.

— Аванах-ха. Ĕçлет. Тăрăшать, — терĕм эпĕ.

— Мана ун сăввисене куçарма тĕл килчĕ. Лайăх çырать. Чăваш халăхĕн пурнăçне, йăли-йĕркине тĕплĕн пĕлет. Унпа эсир тивĕçлипех мухтанма пултаратăр, — терĕ Железнов. Унтан вăл поэтăн «Чăваш чĕлхи» сăввине хăй хавхаланса куçарни çинчен каласа пачĕ.

— Унăн çав сăввине эсĕ астăватăн-и? — терĕ вăл. Эпĕ вара: «Астăватăп. Сăвă çакăн пек йĕркесемпе вĕçленетчĕ пулас:

Сана паян тиркевлĕ хурлаканĕ
Ăçта кам пулĕ пысăк çĕр çинче, —
Мухтатăп эпĕ, гварди капитанĕ,
Сана хĕвел те уйăх умĕнче», — терĕм.

— Акă халь çав йĕркесенех, эпĕ куçарнисене, итлĕр-ха. Вырăсла вĕсем мĕнле янăраççĕ, — терĕ те поэт сăвă калама тытăнчĕ. Юлашкинчен вăл: «Мĕнле хăватлă сăмахсемпе вĕçленĕ поэт хăйĕн тăван чĕлхи çинчен хавхаланса çырнă сăввине», — терĕ.

— Эсĕ ку сăвва 1950 çулта чăваш литературипе искусствин кунĕсем Мускавра пулса иртнĕ чух Советсен çуртĕнче, колоннăллă залра вуласа панăччĕ пулас, — терĕм эпĕ.

— Тĕрĕс. Эпĕ ăна вуласа панăччĕ...

— Литература каçне пынă çынсем ку сăвва кăмăлласа итлерĕç, алă çупса йышăнчĕç, — терĕм эпĕ. Железнов пăртак кулараххăн ман çине пăхса илчĕ те:

— Ухсай çав вăл. Ахаль мар ăна эпир хисеплетпĕр. Ун ăсталăхĕнчен, пултарулăхĕнчен тĕлĕнетпĕр. Шупашкара кайсанах ăна манран пысăк салам кала. Мускавра унăн çывăх тусĕсенчен пĕри — Павел Железнов поэт пурăннине яланах аса илсе пурăнтăр, — терĕ.

Акă тата тепĕр асаилӳ. Пĕр çулхине эпир, Николай Дедушкин, Аркадий Эсхель, Владимир Ухли, Алексей Талвир, Александр Кăлкан, Алексей Воробьев писательсем Воронежра пултăмăр, кунта хамăр литература кунĕсене ирттертĕмĕр, Алексей Кольцов поэтăн юбилейне хутшăнтăмăр. Çак юбилее Мускавран Сергей Васильев, Егор Исаев, Виктор Боков тата ытти поэтсем пынăччĕ. Ун чухне ман пата Егор Исаев пырса тăчĕ те:

— Эсĕ кам пулатăн, ăçтан, хăш республикăран килнĕ? — тесе ыйтрĕ.

— Эпĕ Чăвашран, хушаматăм Давыдов-Анатри, — терĕм. Исаев эпĕ чăваш поэчĕ иккенне пĕлсенех, Ухсай çинчен калаçма пуçларĕ:

— Сирĕн Ухсайран эпĕ тĕлĕнетĕп. Ун произведенийĕсенче ĕмĕрлĕхе асра юлакан ӳкерчĕксем, сăнарсем, йăли-йĕркисем çав тери нумай. Поэт вĕсене хăй асĕнче сыхласа хăварма пултарнă. Ун пултарулăхĕ нумай енлĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ вăл çырнисене вулакансем хапăлласа йышăнаççĕ. Ухсай чăннипех те халăх поэчĕ, — терĕ вăл.

Çакна та каласа хăварассăм килет: 1950 çулта Мускавра чăваш литературипе искусствин каçĕсем пулса иртнĕ чух Горбунов ячĕпе хисепленекен заводăн Культура керменĕнче ирттернĕ каçа Александр Трифонович Твардовский ертсе пычĕ. Литература каçĕ пуçланиччен вăл пирĕнпе, чăваш писателĕсемпе, ăшшăн, кăмăллăн калаçса ларчĕ. Александр Трифонович йĕри-тавра çаврăнса пăхрĕ те:

— Сирĕн Ухсай ăçта, курăнмасть? — тесе ыйтрĕ. Çав вăхăтра, сăмах çинех, Ухсай пырса кĕчĕ. Икĕ пысăк поэт пĕр-пĕрне ырă сунса алă пачĕç те кăмăллăн калаçма пуçларĕç. Твардовский Ухсая:

— Ăçта эсĕ, тусăм, юлташусенчен кая юлса çӳретĕн? — терĕ пăртак кулараххăн.

Эпĕ вĕсем ăшшăн калаçса ларнине ытараймасăр пăхса тăратăп. Çакна Ухсай туйрĕ пулас, ман еннелле пăхса илчĕ те:

— Паллашăр, Александр Трифонович, ку пирĕн çамрăк поэт Василий Давыдов, — терĕ.

Çапла вара мана Твардовскипе паллаштаракан çынсенчен пĕри Ухсай пулчĕ. Твардовскипе эпĕ хамăн пурнăçра пĕр-икĕ хутчен тĕл пулса калаçнă. Яланах пирĕн калаçу Ухсайран пуçланатчĕ.

— Яков мĕнле пурăнать? Сывлăхĕ аванах-и, мĕн çырать? — тесе ыйта-ыйта пĕлетчĕ.

Акă, тата тепĕр асаилӳ. Пĕр çулхине эпĕ Мускаврва издательствăсенче ĕçлекен редакторсен курсĕнче вĕрентĕм. Çав вăхăтра пире Переделкинăри писательсен пултарулăх çуртне Корней Иванович Чуковский писательпе тĕл пулма илсе кайрĕç. Корней Иванович пире çав тери тарават кĕтсе илчĕ. Вăл хăй патне пынă редакторсемпе паллашма пуçларĕ. Черет ман пата та çитрĕ.

— Эсĕ ăçтан пулатăн? Паллашар, — терĕ Корней Иванович.

— Шупашкартан. Чăваш патшалăх издательствинче редакторта ĕçлетĕп, — терĕм. Писатель эпĕ чăваш иккенне пĕлсенех Ухсай çинчен ыйтса пĕлме пуçларĕ.

— Эпĕ нумаях пулмасть унăн «Кĕлпӳк мучи» поэмине вуларăм. Аван çырнă. Поэма кăмăла кайрĕ. Киле кайсан ăна манрăн салам кала, — терĕ. Эпĕ çак асран кайми тĕлпулу хыççăн хамăн кун кĕнеки çине çапла çырса хутăм:

Нихçан лармасть пуçне усса
Авалхи тус, Якку Ухсай.
Çĕрне-кунне пĕлмест, çырать,
Çĕр ĕçченне чунтан мухтать, —

терĕм.

Ухсай Атăл леш айккинчи Кăкшăмри писательсен пултарулăх çуртне çулсеренех ĕçлеме пыратчĕ. Çапла, пĕррехинче ирхи апат çинĕ хыççăн, пăхатăп та икĕ халăх поэчĕ Ухсайпа Хусанкай хĕрӳллĕн калаçса лараççĕ. Хăйсем вăрçăра фашизма хирĕç пăшалпа та, перопа та çапăçни çинчен пĕр-пĕрне кала-кала параççĕ.

— Чăнах та, вăрçăра чăваш салтакĕсем чăн-чăн улăп пек çапăçнинчен эпĕ яланах тĕлĕнеттĕм. Вĕсен паттăрлăхĕпе мухтанассăм килсе тăратчĕ, — тет Ухсай.

— Вăрçăра тĕрлĕ халăх ывăл-хĕрĕн туслăхĕ мĕнле вăйлăччĕ тата. Эпĕ кун çинчен хам куçпа курнă вуншар тĕслĕх çинчен каласа пама пултаратăп. Халăхсен вăрçăри çирĕп туслăхĕ тăшмана çĕнтерме пулăшрĕ те ĕнтĕ, — терĕ Хусанкай.

Ухсай пурнăçра мĕнле те пулин йывăрлăх килсе тухсан хăйне лăпкăн тытма тăрăшатчĕ. Çапла, Кăкшăмра эпĕ, Яков Ухсай, Петĕр Чичканов пĕрле мунчана кайрăмăр. Мунча çав тери вĕри. Çĕнĕ милĕкпе пĕрер хут çапăннă хыççăн мунча умне тухса ларма шутларăмăр. Хамăр шăкăл-шăкăл калаçма пуçларăмăр. Унччен те пулмарĕ, пирĕнпе ыталансах ларакан Чичканов урайне персе анчĕ. Мĕн тумалла? Ухсайпа иксĕмĕр те хыпăнса ӳкрĕмĕр. Пуçа темĕнле шухăш та пырса кĕрет.

— Васлей, питех çухалса ан кай-ха. Кунта тухтăр çук. Камран пулăшу кĕтес? Атя, Петĕре хăвăрт кăна пулăшу парар, икĕ аллине тытса искусственнăй майпа сывлаттарар, — терĕ. Тĕлĕнмелле, çапла туни пулăшрĕ пулас. Чичканов хаш! сывласа ячĕ. Куç-

не уҫрӗ. Пире те чун кӗрсе кайрӗ.

— Санпа мӗн пулса иртнине ӑнланса илтӗн-и эсӗ? — тесе ыйтрӑмӑр Чичкановран.

— Нимӗн те ӑнланмастӑп, нимӗн те астумастӑп... — тет Чичканов.

Акӑ, тата, Кӑкшӑмрах, кӗтмен ҫӗртен Яков Гаврилович мӑнукӗ, Лена хӗрӗн ывӑлӗ Мӗкӗте пӑч ҫухалчӗ. Кунта вӑрманлӑ вырӑн. Атӑл та ҫумрах. Мӗн тумалла? Эпир пурте хыпӑнса ӳкрӗмӗр. Ним тума та пӗлместпӗр.

— Хуйхӑрса ларнипе ӗҫ пулмасть. Атьӑр, пурте шырама каяр Мӗкӗтене, тупасах пулать, — терӗ Яков Гаврилович. Пурте васкавлӑн ача шырама тухса кайрӑмӑр. Чылай вӑхӑт иртрӗ. Ҫук, Мӗкӗтене тупаймастпӑр. Хуйхӑрса калаҫса тӑнӑ вӑхӑтра курах кайрӑмӑр: Мӗкӗтене амӑшӗ ҫавӑтнӑ, аслашшӗ Яков Гаврилович патне илсе пырать.

— Ӑҫта пулнӑ вӑл? — терӗмӗр пурте тӗлӗнсе.

— Хӗрсемпе качӑсем ташлакан вырӑнта. Алӑ ҫупса тӑра парать, — терӗ ача амӑшӗ Елена Яковлевна Ухсай.

Ухсайсемпе эпир яланах килӗштерсе пурӑннӑ. Яков Гаврилович час-часах пирӗн пата пыратчӗ. Вӑл ман кӗрекере те сахал мар пулнӑ. Ухсай пур чухне хваттерте яланах сӑвӑ-юрӑ янӑраса тӑратчӗ. Эпир, хамӑн мӑшӑрпа, Марьепе пӗрле, Ухсай сӑввипе Федор Васильев композитор ҫырнӑ «Кӳршӗ каччи» юрра шӑрантараттӑмӑр. Ҫак юрра питех те кӑмӑллатӑмӑр. Ҫавна пула та ӗнтӗ ӑна темиҫе хутчен юрла-юрла параттӑмӑр. Ухсай савӑнса итлесе ларатчӗ. Ҫавӑн пекех Ухсай хӑй сӑввисене вуласа панине итлесе ларма юрататчӗ. Якку Гаврилович хӑнана пырсан эпир яланах вӑл парнеленӗ «Лирика» кӗнекине алла илеттӗмӗр те унти сӑвӑсене вулама пуҫлаттӑмӑр. Тӗлӗнеттӗмӗр вара — ҫак хулӑм кӗнекери сӑвӑсене малтан пуҫласа вӗҫне ҫитиччен вуласа тухаттӑмӑр. Ухсай пӗр шавламасӑр итлесе ларатчӗ. Чунтан савӑнатчӗ поэт.

Ухсай мухтаннине юратмастчӗ. Акӑ, пӗрре ҫапла Марье мӑшӑрӑм аш кукӑлӗ пӗҫерчӗ.

— Ваҫҫа, ҫакна Якку Гавриловича кайса ҫитерер мар-и? Вӑл ҫӑкӑр-тӑвара хисеплекен ҫын, — терӗ.

Эпӗ килӗшрӗм. Яков Гаврилович килтех иккен. Ун ҫумӗнче Ульха хӗрӗн ывӑлӗ Энтри тӑрать.

— Эпир сирӗн валли халь ҫеҫ пӗҫернӗ аш кукӑлӗ илсе килтӗмӗр. Пирӗн кучченеҫе ҫисе пӑхмӑр-ши? — терӗмӗр. Яков Гаврилович ҫӑкӑр-тӑваршӑн тав турӗ те пирӗнпе пӗрле кукӑль ҫиме пуҫларӗ. Эпӗ чӑтаймарӑм, пӑртак мухтанса илме шутларӑм пулас.

— Яков Гаврилович, сана ман Марье чӑнах та хисеплет. Паян та акӑ ӳркенмерӗ, кучченеҫпех килчӗ. Мӗнле кӑмӑллать вӑл сана, — терӗм. Ухсай ман ҫине пӑртак кулараххӑн пӑхса илчӗ те:

— Пӗлетӗн-и, Ваҫҫа, хӑй лашипе мухтанакан чӑваш — ҫур ухмах, хӑй арӑмӗпе мухтанакан ҫын — тӑр ухмах, — тесе хучӗ. Пурте кулса ятӑмӑр. Кӳренместӗмӗр эпир Ухсая. Вӑл ун пек сӑмахсене ҫынна кураймасӑр каламаннине туйса тӑраттӑмӑр.

Эпӗ Ухсайпа пӗрле вулакансемпе сахал мар тӗлпулусем ирттернӗ. Пӗр ҫулхине эпир чӑваш, пушкӑрт писателӗсем, поэт ҫуралнӑ Слакпуҫӗнче пултӑмӑр. Ял ӗҫченӗсем пире, хӑйсен хаклӑ ентешне, Ухсая, ӑшшӑн, ҫӑкӑр-тӑварпа кӗтсе илчӗҫ.

Ҫул хыҫҫӑн ҫул иртрӗ. Поэт утмӑл ҫул тултарчӗ. Ун юбилейне пӗтӗм тӑван халӑхӑмӑр чаплӑн паллӑ туса ирттерчӗ. Шупашкарта И. Я. Яковлев ячӗпе хисепленекен Чӑваш патшалӑх педагогика институтӗнче юбиляр ячӗпе сӑвӑ-юрӑ янӑраса тӑчӗ. Ухсая партипе совет организацийӗсем, тӑванӗсем, тус-юлташӗсем саламларӗҫ. Эпӗ те поэта халалласа ҫырнӑ «Ларатӑп эп сӗтел пуҫне» сӑвва каласа патӑм:

Чуна темле кичем чухне
Ларатӑп эп сӗтел пуҫне,
Илеп Ухсай сӑввисене,
Тарпа, чунпа ҫырнисене.

Туятӑп эпӗ Ухсайра
Тӑван чӗлхемӗр илемне.
Эпир хальхи самантра
Яман чӑваш ятне, чысне.

Туятӑп эпӗ Ухсайра
Тӑван поэзин хӑватне.
Эпир ҫак аслӑ ҫӗршывра
Талантлӑ халӑх иккенне.

Ухсайӑн Тӑван ҫӗршывӑмӑрӑн пур кӗтессисенче те ҫывӑх тусӗсем пурччӗ. Вӑл ман ҫывӑх юлташӑмпа, Новгород хулинче пурӑнакан вырӑс писателӗпе, Александр Васильевич Ежовпа туслӑччӗ. Ун ҫинчен яланах ырӑпа калаҫатчӗ.

— Сашӑна ҫӗршывӗпе паллӑ писатель Федор Абрамов ҫав тери хисеплет. Вӗсем ҫывӑх туссем. Ежовра чӑн-чӑн вырӑс ҫыннин чунӗ, ӗҫченлӗхӗ пур. Вӑл санӑн та ҫывӑх тусу... Ҫав туслӑха нихҫан та ан ҫухат. Ежов часах 60 ҫул тултарать. Ун патне халех саламлӑ телеграмма ярар, — терӗ.

Ҫав кунах Новгорода, писатель патне ҫакӑн пек телеграмма ятӑмӑр:

«Поздравляем. Желаем тебе былинное здоровье, русскую удаль, чувашскую скромность.

С чувашским саламом Яков Ухсай,
Василий Давыдов-Анатри.

26 апреля 1982 года».

Александр Ежов пӗр-икӗ хутчен те пирӗн республикӑра пулчӗ. Шупашкара ҫитсенех вӑл Якку Гаврилович патне васкатчӗ. Ӗмӗр манми тӑвансем пек калаҫатчӗҫ вара вӗсем. Ухсай яланах хӑй Твардовскипе мӗнле паллашни ҫинчен аса илсе кала-кала паратчӗ.

— Вырӑссен аслӑ поэчӗпе Александр Трифоновичпа паллашни манӑн пурнӑҫра ҫав тери ырӑ йӗр хӑварчӗ. Эпир пӗр-пӗрне лайӑх ӑнланнӑ. Вӑл Борис Иринин вырӑсла куҫарнӑ «Нарспи» поэмӑна редакцилерӗ, кӗнекен умсӑмахне те ҫырчӗ. Пуриншӗн те ӑна тавах! — тетчӗ.

1981 ҫулта Ухсай 70 ҫул тултарчӗ. Пирӗн тӑван халӑхӑмӑр ҫак юбилее лайӑх ирттерчӗ. Тӑван ҫӗршывӑмӑр поэтӑн пархатарлӑ ӗҫне-хӗлне тивӗҫлипе хакласа Ленин орденӗпе наградӑларӗ. Эпир, чӑваш поэчӗсем, пурте тенӗ пекех ҫак чаплӑ юбилее хутшӑнма тӑрӑшрӑмӑр. Эпӗ те халӑх поэтне халалласа «Пирӗн Ухсай» ятлӑ пысӑк сӑвӑ ҫыртӑм. Унта аслӑ поэта хам мӗнле ӑнланни ҫинчен, унӑн тӑван халӑхшӑн тунӑ пархатарлӑ ӗҫӗ-хӗлӗ ҫинчен ҫырса кӑтартма тӑрӑшрӑм. Ку сӑвва поэта чысланӑ чаплӑ ларусенче Шупашкарта, унтан Мускавра Александр Фадеев ячӗпе хисепленекен литература ҫуртӗнче вуласа патӑм. Сӑввӑма тӑван халӑхӑмӑр кӑмӑлласа йышӑнни мана та чун-чӗререн савӑнтарчӗ. Хамӑр хушшӑмӑрта чылай ҫулсем хушши пыракан туслӑха татах та ҫирӗплетрӗ.

Пӗр ҫулхине эпир писательсем, артистсем К. В. Ивановпа Я. Г. Ухсай ҫуралнӑ ялта, Слакпуҫӗнче, пултӑмӑр. Пирӗнпе пӗрле Яков Гаврилович та пыма кӑмӑл турӗ. Пушкӑртра аслӑ поэтӑмӑр Константин Иванов уявӗ пулса иртрӗ. Слакпуҫсем пире ҫӑкӑр-тӑварпа кӗтсе илчӗҫ.

Яков Гаврилович тӑван ял ӗҫченӗсен ҫӑкӑрне алла илсе чуптурӗ те:

— Тавах сире, тӑванӑмсем, пире ҫӑкӑр-тӑварпа кӗтсе илнӗшӗн. Ҫӗр ҫинче ҫӑкӑртан асли нимӗн те ҫук. Вӑл пулсан пурнӑҫ та, сӑвӑ-юрӑ та пулать. Эпир сире пӗтӗм чун-чӗререн ырлӑх-сывлӑх су-

натпăр. Ĕçĕр-хĕлĕр яланах ăнса пытăр. Сĕтелĕрсем çинче яланах çакăн пек çăкăр пултăр, — терĕ тĕл пулнă чух поэт. Кӳренсе калаçни те пулчĕ. — Тăванăмсем, чунăм ыратать. Эсир çутçанталăка хакласах каймастăр. Эпĕ ача чухне пирĕн таврара йывăçсем кашласа ларатчĕç. Çутçанталăк мĕнле пуянччĕ. Ун илемĕпе савăнса пурăнаттăмăр. Халĕ вара çулсерен çав пуянлăх, çав илемлĕх пĕтсе пырать. Йывăççене касса пĕтеретĕр. Ку çав тери хитре мар япала. Акă мĕншĕн чунăм ыратать, — терĕ вăл.

Слакпуçсем кӳренмерĕç поэта. — Якку Гаврилович тĕрĕс калать. Ĕçлемелле. Çутçанталăка сыхласа хăвармалла, — терĕç вĕсем.

1986 çулта Ухсай сывлăхĕ начарлана пуçларĕ. Эпир пĕрле больницăра та вырттăмăр. Çапла, пĕрре унпа калаçса ларнă чухне, хам та асăрхаман, вилĕм çинчен сăмах пуçларăм. Яков Гаврилович мана çавăнтах хулпуççинчен хытах тĕртсе илчĕ те:

— Мĕн эс, Ваçça, вилĕм çинчен калаçма пуçларăн. Поэтсем вилме мар, пурăнма çуралаççĕ. Ăнланатăн-и çавна! — терĕ. Эпĕ урăх пĕр сăмах та калаймарăм. Поэта ăнлантăм пулас.

1981 çулхи сентябрĕн 18-мĕшĕ. Эпĕ Ухсай килĕнче. Поэтпа чунчĕререн калаçса ларатпăр. — Çулсем хăвăрт иртеççĕ. Эсĕ те акă çитмĕле çывхарса пыратăн. Хăвăн хаклă вăхăтна чылай чухне усăсăр иртеретĕн. Вăй-хал пур чухне çырас пулать. Çĕре юратакансене мухтамалла. Кахалсене, харампырсене питлемелле. Вĕсем пире пурăнма ан чăрмантарччăр. Пирĕн Кĕлпук пек пулмалла, — терĕ Ухсай. Унтан вăл хăй умĕнче выртакан «Сельские поэмы» кĕнекине илчĕ те мана парнелерĕ. Кĕнекен малтанхи листи çине çапла çырса хучĕ:

*«Тĕрĕс сăмаха пат татса калакан талантлă тусăма — Ваçлее.*

*Я. Ухсай.*

*18.9.1981».*

Эпĕ çавăнтах Яков Гаврилович сăмахне ăнланнине палăртас тесе пулĕ «Тăван поэтăмăр, Ухсай» сăввăма сасăпах вуласа патăм:

Чăваш поэчĕ эс, Ухсай, —
Мĕн ыррине пĕрле пухса
Пиллетĕн ĕçлĕ халăха, —
Пире çав хаклă, çав паха.

Пуса каччи пек сăнупа,
Çунатлă сăвă-юрăпа
Кал-кал утатăн улăпла,
Хĕвеллĕ аслă çулпала.

Эс хăраман йывăрлăхран,
Ĕçрен писмен, çĕртен тарман,
Суя çынна пуçна тайман,
Аçу-аннӳ ятне яман.

Ивановпа эс, Çеçпĕлпе,
Мĕнпур çыру ăстисемпе
Ĕçлен тăван поэзире,
Мирпе телей сунан пире! —

терĕм.

Ухсай кулса ячĕ. Манпа кӳренсе калаçнине урăх палăртмарĕ.

Пĕррехинче эпĕ чăваш халăх писателĕ Александр Артемьев килĕнче пултăм. Вăл мана хăй патне Ухсай çырнă çырăва пачĕ. Ăна поэт 1958 çулхи мартăн 12-мĕшĕнче çырнă-мĕн. Ку çыру копине эпĕ халăх писателĕ ирĕк панипе хам архив валли çырса илтĕм. Çак çыру копийĕ ан çухалтăр тесе, кĕскетсе те пулин хам çырнă асаилӳ çине кĕртсе хăварсан та юрать пулĕ тетĕп: «Эпĕ сана Шупашкартан хуса кăларса ярасшăнччĕ, анчах унта пырса тухма кăмăл та, вăхăт та çук, тесе çырать Ухсай. — Эппин, яла тухса кайрăн... Халĕ ĕнтĕ Бальзак пек кăкăр тирĕ çинче çăм ӳстер, ăна чĕпĕткелесе çыр та çыр, аслă çынсене ĕçпе тĕлĕнтер, вĕçкĕннисене вĕчĕхтер... Шупашкара çуркуннеччен, шыв-шур типиччен, пырасшăн мар-ха эпĕ. Унта мансăр та эрех ĕçекен нумай...

Ырлăх сунакан Я. Ухсай».

Яков Гаврилович Ухсайăн юлашки кунĕсем çинчен ман блокнотра çакăн пек çырса хăварнă йĕркесем пур:

«1986 çулхи июнĕн 11-мĕшĕ. Пире Николай Дедушкин писатель Ухсай больницăра выртни, сывлăхĕ çав тери начарланса çитни çинчен каларĕ.

Марье мăшăрăмпа ун патне кайрăмăр.

— Яков Гавриловича ĕнер килне илсе кайрĕç, — терĕç больницăра ĕçлекенсем.

Эпĕ тӳрех ун хваттерневаскарăм. Ухсай килĕнче пĕчченех. Вырăн çинче выртать.

— Ăçта эсĕ çухалса пурăнатăн? — тесе ыйтрĕ вăл.

Эпĕ ăна хăй патне мĕншĕн час-час килсе çӳременни çинчен каларăм, хам та сывалма санаторине кайни çинчен пĕлтертĕм.

Чылайччен калаçса лартăмăр.

— Çитес эрнере Вăрмар районне каятпăр. Социализмла Ĕç Геройĕ Сергей Лукин ертсе пыракан Мичурин ячĕпе хисепленекен колхоз ĕçченĕсемпе тĕл пулма шутлатпăр, — терĕм эпĕ. Çапла калаçса ларнă чухне Яков Гаврилович вырăн çинчен пуçне çĕклерĕ те:

— Лайăх япала. Акă камран çĕре юратма, ял ĕçченне хисеплеме вĕренмелле! Лукин — чăн-чăн герой! Вăл çĕр ĕçченĕсен шанăçне тӳрре кăларчĕ. Ун колхозĕнче пурте йĕркеллĕ, ĕç те ăнса пырать. Ял ĕçченĕсем те лайăх пурăнаççĕ. Манран ăна, ял ĕçченĕсене пысăк салам калăр, — терĕ.

Эпир Яков Гаврилович ыйтнине пурнăçларăмăр. Вăрмар районĕнчи çĕр ĕçченĕсем патне халăх поэчĕн саламне çитертĕмĕр.

1986 çулхи хĕвеллĕ çуллахи кун. Ирхине кĕтмен çĕртен йывăр хыпар илтрĕмĕр. Пирĕн çывăх юлташăмăр, ĕçри тусăмăр Яков Гаврилович Ухсай вилни çинчен пĕлтĕмĕр.

Чăваш халăхĕ хăйĕн чунтан юратнă поэчĕпе Ухсайпа ĕмĕрлĕхе уйрăлчĕ. Поэт каласа хăварнине асра тытса ăна хăй çуралнă Пушкăртри Слакпуç ялĕ çумĕнчи Кĕсле тăвĕ çине пытарчĕç. Халăх поэчĕн ӳтне Пушкăрта ăсатнă чух самолет Шупашкар тĕлĕнче тӳпере темиçе хутчен вĕçсе çаврăнчĕ. Ухсай ĕмĕрлĕхех тăван республикăпа сывпуллашрĕ.

Ухсай вилни пĕтĕм тăван çĕршывăмăршăн пысăк çухату пулчĕ. Ман пата та тус-тăванăмсенчен, юлташăмсенчен сахал мар хуйхăллă çырусем килчĕç.

«Очень опечален кончиной дорогого Якова Гавриловича Ухсая. Ушел от нас большой поэт, замечательный человек и друг. Незабываемы в моей памяти встречи с ним, и особенно последней: на съезде Союза писателей РСФСР. Но что поделаешь? Все мы не вечны, и каждому судьбой определен свой срок. Якова Гавриловича буду помнить всегда», — тесе çырчĕ ман пата Новгород хулинчи пирĕн тусăмăр Александр Ежов писатель.

Акă тата: «Дорогой Василий Иванович! Пакет с печальной газетой получил. Вместе с Вами скорблю о нашем великом Ухсае.

Очень сожалел, что меня дома не было, когда его навеки соединили с его родной землей. При первой же возможности я навещу его могилу.

Передайте мои приветы всем хорошим людям.

Жму руки Ваши.

Мустай Карим».

*Юлашкинчен çакна çырса хăварасшăн: эпĕ Яков Гаврилович Ухсая тăван поэзири чăн-чăн улăп тесе шутланă. Чăнах та вăл çапла. Ухсай — халăх поэчĕ! Ухсай — вилĕмсĕр поэт!*

1988—1991 çç.